[illegible]-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 3 ЮНКУН 127(6062) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозниксемпе колхозницăсем! Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнар!

Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказпа хавхаланса, пĕтĕм совет халăхĕ тăван çĕршыва геройла хÿтĕлекен Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăшас ĕçе кунран-кун вăйлатса пырать. Пирĕн çĕршывăн халăхĕ ĕçре паттăрлăх, пуçарулăх кăтартса, нимĕç фашисчĕсене тĕпренех аркатса тăкма вăйлă хĕçпăшал хатĕрлет.

Танксем, самолетсем тăвакан, металл шăратакан рабочисем пуçарса янă социализмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пырать. Унăн хумĕ халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те çавăрса илчĕ. Вăл совет халăхĕн патриотизмла аслă движенийĕ пулса тăчĕ.

Ĕнер «Чăваш Коммуни» хаçатра Новосибирск крайĕнчи Чистоозернăй районĕнчи «Путь крестьянина» ялхуçалăх артелĕн тата Казах ССР-ĕнчи Алма-Ата облаçĕнчи Кургански районри Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксене чĕнсе каланисем пичетленсе тухрĕç.

«Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем, Большераковски машинно-тракторнăй станцийĕ социализмлă ялхуçалăхĕнчи ĕççыннисене пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тăвассишĕн тата тракторсемпе, комбайнсемпе, ялхуçалăхĕнчи ытти машинăсемпе туллин усă курассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма чĕнеççĕ.

Колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне пуçаракан колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем çине пысăк обязательствăсем илнĕ, вĕсен хĕрÿ сăмахĕ Совет Союзĕнчи, çавăн пекех тата пирĕн Чăваш республикинчи пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсен, ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм работниксен патриотизмла кăмăлне çĕклет.

Тăван çĕршывпа фронта тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах кирлĕ. Кăна пирĕн колхозниксем ăнланаççĕ. Республикăри колхозсенче кашни колхозникпа колхозница кăçал чи пысăк тухăçлă тырпул ÿстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Çураки ĕçĕсем республикăра вĕçленсе пыраççĕ. Ĕç вăййĕпе туртăм вăйĕ иртнĕ çултинчен сахалрах пулнă пулсан та, машинăсемпе тракторсен вăйĕ сахалрах пулнă пулсан та, çуракинчи ĕçсен калăпăшĕ нумайрах пулнă пулсан та, колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи çуракинче нихăçанхи пек мар пысăк хастарлăхпа ĕçлесе чаплă çĕнтерÿсем тăваççĕ. Иртнĕ çулти çуракинче кашни пилĕк кун хушшинче çураки планне 20 процент пурнăçласа пынă, кăçал пирĕн колхозсем кашни пилĕк кун хушшинче 24 процент ытла пурнăçласа пычĕç. Республикăри колхозсем çĕршыв оборони фондне хывма çураки планĕнчен ирттерсе 3000 гектар ытла тĕштырăсемпе ытти культурăсене акса хăварчĕç. Чăваш республикинчи колхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура та тивĕçлĕ вырăн йышăнĕç.

Анчах та тырă пăхса çитĕнтересси вăл ĕçĕн çурри кăна пулса тăрать-ха. Тепĕр ĕç, чи кирлĕ ĕç вăл—тырра хăвăрт, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси пулать. Сталин юлташ лайăх хуçа пек çапла каланă: «Тырă пухса кĕртесси вăл— пĕр сезонра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтра пухса кĕретĕн—туянатăн, кая юлса пухса кĕретĕн—çухататăн». Çак сăмахсене пирĕн асра тытмалла, пирĕн кăçал туянмалла, çĕнтермелле. «Путь крестьянина» колхоз членĕсем тĕштырăсене 16 ĕç кунĕнче пухса кĕме пулнă. Пирĕн республикăри колхозсем те ăмăртăва хутшăнса тивĕçлĕ обязательство илĕç.

Тырăсене пухса кĕме большевикла хатĕрленме кашни колхозăн халех тытăнмалла. Кăçал тырра алăпа та вырма тивет. Çурласемпе çавасене, çавăн пекех жнейкăсемпе молотилкăсене ĕçе тухма хатĕрлемелле.

Кашни комбайна юсаса лартмалла, кашни çавана туптаса хумалла, çителĕклĕ таран урапасем хатĕрлемелле.

«Путь крестьянина» колхоз членĕсен пуçарăвĕ вăйлă тырпул туса илес ĕçре çавтери паха пуçару пулса тăрать. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсен тивĕçĕ—вăйлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, республикăна мала кăларассишĕн, ăмăртура пĕрремĕш вырăна йышăнассишĕн кĕрешесси пулса тăмалла.

Партипе советăн, комсомолăн вырăнти организацийĕсен «Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем чĕнсе каланине кур колхозсенче те сÿтсе-явас ĕçе организацилес пулать. Кашни колхозникпа колхозницăна Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнтарассишĕн кĕрешмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 1-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

Иртнĕ эрнере, майăн 24-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшне çитиччен, нимĕçсен 432 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çав хушăрах 134 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 31-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 33 танкне, 2 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 160 автомашинине, горючи тултарнă пĕр автоцистернине, 3 бензозаправщикне, боеприпассем тиенĕ 145 лавне, 10 орудине, 13 пулеметне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи 2 эшелона çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, хуралта çÿрекен 4 карапне путарнă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Артиллерирен персе тата разведка групписем çапăçса противникăн 7 блиндажне тата пулеметсен темиçе точкине çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан обозне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Инаури тата Перекрестов юлташсен утлă разведка отрячĕсем (Кăнтăр фрончĕ) тăшман оборонин линине татса шаланла савăлланса кĕрсе кайнă. Нимĕçсем хăйсенчен туртса илнĕ вырăнсене каялла тавăрма хăтланса кун каçиччен темиçе контратака та тунă, анчах пурте вĕсем ăнăçсăр пĕтсе ларнă. Йышăннă рубежа çирĕплетсе лартса, пирĕн кавалеристсем нимĕçсен контратакисене пурне те сирсе янă, вĕсем 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Гримов капитанăн, Шмыгаль лейтенантăн тата Соколов техник-лейтенантăн танкĕсем темиçе орудИ, пĕр танк тата 100 ытла нимĕç автоматчикĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен пехоти танксем пулăшнипе темиçе хутчен те пирĕн стрелковăй чаçăн оборона позицийĕсене йышăнса илме тата юханшыв урлă каçма хăтланнă. Пирĕн боецсем çав участокри хаяр çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Синкин лейтенант командир пулса ертсе пыракан пирĕн разведчиксен взвочĕ сасартăк пырса çапса нимĕçсене халăх пурăнакан К. пунктран хăваласа кăларнă. Гитлеровецсем çакăнта хăйсен 60 салтакĕпе офицерне çухатнă, вĕсене хăшне вĕлернĕ, хăшне амантнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен вĕлернĕ салтакĕн Алоиз Веберăн записной кĕнекинчен уйрăм сыпăксене илсе пичетлетпĕр: «Мобилизаци пире, çулла юр çума пуçланă пекех, нимĕн кĕтмен çĕртен пырса тиврĕ. Пĕрмаях çапла калатчĕç: ютçĕршыв çыннисем те тата пирĕн пата тыткăна лекнĕ салтаксем те нимĕçсен пысăк квалификациллĕ рабочийĕсем вырăнне тăрса ĕçлеме пултараймаççĕ, тетчĕç. Пире халран кайса ураран ÿкиччен ĕçлеттеретчĕç... Халĕ çавăншăн ĕнтĕ фронта ячĕç. Пĕтĕм çар ĕçне эпир 17 кун хушшинче вĕренсе тухрăмăр. Фронта эпир масар çине çемьери çынна пытарма кайнă пек кайрăмăр. Салтаксем нумайĕшĕ пĕтĕм çул тăршшĕпех пĕр сăмах шарламасăр ларса пычĕç...

Ĕнер пирĕн рота пĕр яла йышăнма приказ илчĕ. Эпир усă вырăнпа куçса пытăмăр. Вырăссем пире ял патне сывхарса çитмех пачĕç. Ĕç ăнăçлă пулса иртес пекех туйăнатчĕ. Анчах çакă питĕ хуйхăллă пĕтсе ларчĕ. Каялла тарнă чух эпĕ пирĕн вилнĕ салтаксем купи-купипе выртнине куртăм, аманнисем чуна çурса ярас пек кăшкăрашнине илтрĕм. Вĕсем хăйсене пăрахса хăварасран хăраса пĕрле йăтса кайма ÿкĕтлесе йăлăнчĕç. Анчах никам та вĕсене итлекен пулмарĕ. Пауль таçта кайса кĕчĕ. Ана нимĕн хыпарсăр çухалнă тесе шутлаççĕ. Ана эпĕ тыткăна лекнĕ пулĕ тесе шутлатăп. Рихтер вилнĕ. Вĕрентмен, нимĕн тума та пĕлмен резервистсене чи хăрушă вырăнсене хăваласа кĕртеççĕ. Вара вĕсем сурăхсем пекех пĕтеççĕ. Пире вырăссен вучĕ ăшне, вилĕм ăшне хăвалаççĕ...»

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен словаксен дивизийĕн юлашкийĕсем Словакие тавăрăннă. Вăл дивизие малтанхи çапăçусенчех аркатса тăкнă. Словаксем нумайĕшĕ хăйсен ирĕкĕпех тыткăна парăннă. Мĕнпурĕ те пин салтак ытларах çеç çăлăнса тухнă, вĕсенчен те нумайĕшĕсем е аманнă, е чирлĕ.

* * *

Германире продовольстви енĕпе пулса тăнă катастрофа влаçа тытса тăракан гитлерла шайкăри харкашăва татах та ытларах вăйлатса янă. Çак кунсенче продовольствипе çĕрĕç министрне Даррене вырăнтан кăларнă та, пĕлтернĕ тăрăх, тĕрмене хупса лартнă. Даррене хăй ĕçĕнчен вăл Гитлерпа килĕшмен пирки сирнĕ. Дарре продовольстви продукчĕсен хальхи нормине 50 процент чакарма ыйтнă. Унсăрăн çитес хĕлте Германие выçлăх вĕлерет, вара фронтри ĕçсем кирек мĕнле пулсан та Германин пур пĕрех пĕтсе лармалла пулать. Министрсенчен пĕрне тĕрмене лартмалла тивет пулсан, власть умĕнче тăракан гитлерла шайкăн ĕçĕсем начар пулас вара. Анчах та ун пек мерăсем Германин положенине юсаса ярассине пĕрре те шанма çук.

Июнĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехотин батальонĕ, танксем пулăшнипе, пирĕн подразделение атакăланă. Пирĕн боецсем, пехотăн хĕçпăшалĕнчен персе, нимĕçсене çĕр çумне лапчăнтарнă, унтан контратака тунă та противника сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 200 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă. Пирĕннисем 8 пулемет, 2 миномет, 30 автомат тата 80 винтовка тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекен пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) тăватă кун хушшинче противникăн 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть çĕрле нимĕçсем çине атака тунă та хăйĕн позицийĕсене лайăхлатнă. Противникăн 140 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Пирĕн боецсем танксене хирĕç пемелли 2 оруди, боеприпассен складне, минометсен батарейине тата 5 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче нимĕçсен авиацийĕ пирĕн çар объекчĕсем çине тапăнма хăтлана-хăтлана пăхнă. Ерлыкин, Андреев тата Баранов юлташсем командир пулса тăракан авиаподразделенисен летчикĕсем тата зенитчиксем тăшманăн самолечĕсене çав объектсем патне вĕçсе пыма паман. Пирĕн истребительсем сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 47 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

С. юлташăн партизанла отрячĕ, Украинăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, итальянецсем йышăнса тăракан ял çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Партизансем итальянецсен оккупанчĕсене 125 çынна пĕтерсе тăкнă, итальянецсен 2 танкне çунтарса янă тата 5 пулемет, 3 миномет, радиостанци, 40 винтовка тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Венгерецсен 108-мĕш бригадинчен тыткăна лекнĕ прапорщик Карой Надьшваб çапла каласа панă: «Российăна янă чухне пире çапла каларĕç: ку бригада нимĕç войскисен тылĕнче хурал ĕçне туса тăрĕ, терĕç. Часах эпир хамăра улталанине куртăмăр. Мартран пуçласа бригада ялан фронтра-ха. Пирĕн полка Б. ялĕ патĕнчи вăрмана кирек-мĕн пулсан та хамăр алăра тытса тăма приказ пачĕç. Вырăссем пирĕн оборонăна çĕмĕрчĕç те вăрмана пĕрхĕнсе кĕчĕç. Батальонсем виççĕшĕ те питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕç, васкасах каялла чакрĕç. Мана тата темиçе салтака совет танкĕсем хăваласа çитрĕç те, эпир вара тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нимĕçсен унтер-офицерĕ Иосиф Лериг нумаях пулмасть Штайнер унтер-офицер патне çапла çырнă: «Ĕнер эпир атакăна кайрăмăр. Çапла хăтланнăшăн пирĕн питĕ хаклă тÿлемелле пулчĕ. Геринг фельдфебеле вĕлерчĕç. Вилли Шерельца 5 пуля лекнĕ. Пурне те каласа тухас пулсан, вăхăт нумай кирлĕ пулать. Мĕн пулĕ-ши пире? Кунтан хăçан та пулсан киле таврăнасса эпĕ питĕ сахал ĕненетĕп».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Харьков облаçĕнчи Верхний Бишкин ялĕнчи çынсене — стариксемпе хĕрарăмсене тата ачасене 300 çынна ытла асаплантарса, çакса тата персе вĕлернĕ.

* * *

Швейцарири пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх, Венгри чиккинче Румыния вăрçа хатĕрленнĕ пирки Венгрире пăшăрханаççĕ. Венгрин ертсе пыракан çыннисем—румынсем Венгри çине кирек хăш вăхăтра та тапăнма пултараççĕ, тесе шутлаççĕ. Майăн вĕçĕнче Клуш районĕнче Румынипе Венгри погранчникĕсем каллех пĕр-пĕринпе тытăçса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксене пулăшмалли фонда хывма Кубаньри 64 районри колхозсем планран ирттерсе 10.614 гектар тĕштырă акса хăварнă.

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составĕнчи çак аялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсем парас:

ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ

Матвей Васильевич **Захарова**

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Николай Васильевич **Королькова**

Григорий Петрович **Котова**

Тихон Давыдович **Клишева**

Георгий Павлович **Лиленкова**

Павел Петрович **Мирошниченкăна**

Леонид Васильевич **Онянова**

Самуил Миронович **Рогачевские**

Николай Иванович **Труфанова**

АРТИЛЛЕРИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Дмитрий Иванович **Турбинăна**

ТАНКОВĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Андрей Лаврентьевич **Гетмана**

ÇЫХĂНУ ВОЙСКИСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Павел Игнатьевич **Белявцева.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 ç. майăн 30-мĕш.

Паттăр партизансене пулăшма

Комсомол хула комитечĕ пуçарнипе Чăваш ялхуçалăх институчĕн студенчĕсем Хĕрлĕ Çарăн шанчăклă помощникĕсене—партизансене пулăшма 730 тенкĕ укçа пухса пачĕç. Çак пысăк та кирлĕ мероприятие лайăх иртерес тĕлĕшпе комсомол комитечĕн секретарĕ Тихомирова юлташ тата Васильева, Ломоносова, Касерина комсоргсем тăрăшса ĕçлерĕç. Касерина юлташ хăй вĕренекен курсра 180 тенкĕ пухнă.

Студентсем те пысăк активлăх кăтартрĕç. Никитина, Лазарева, Шевнина, Горохова, Каховкина тата ытти юлташсем те паттăр партизансене пулăшма 20-шер тенкĕ, 1-мĕш курсра вĕренекен студентка [illegible]тьева 30 тенкĕ пачĕç.

М. СМЕТАНИН.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатри комсомолецсемпе çамрăксем партизансем патне кучтенесем яма хатĕрленеççĕ. Çак кунсенче вĕсем ĕç хыççăн 15 котелок турĕç, 10 михĕ çĕлерĕç тата тĕрлĕрен япала илме 2.000 тенкĕ укçа пухрĕç. Тунă тата илнĕ япаласене çитес кунсенче партизансем патне ярса параççĕ.

Х. ЛИСИН.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

54. Шăхасан МТС-ĕнчи **Константин Петрович Петров юлташ ертсе пыракан тракторсен бригади.** Петров юлташăн бригади майăн 14-мĕшчен, çемçе суха çине куçарса шутласан, 471 гектар сухаланă, план тăрăх 380 гектар сухаламалла пулнă; вăл тата 1.213 килограмм горючи перекетленĕ. Ĕçре çак трактористсем чи лайăх тĕслĕхсем кăтартнă: **А. Г. Гордеев** юлташ, вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе хăй сменинче мĕнпурĕ 98,3 гектар сухаланă, 348 килограмм горючи перекетленĕ; **Г. Алексеев** юлташ, вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе хăй сменинче мĕн пурĕ 91,3 гектар сухаланă, 290 килограмм горючи перекетленĕ; **Серафима Сидорова** юлташ, вăл хăй сменинче 68,5 гектар сухаланă, 183 килограмм горючи перекетленĕ; **С. М. Краснов** юлташ, вăл хăй сменинче 74 гектар сухаланă, 230 килограмм горючи перекетленĕ; **Варвара Васильева** юлташ, вăл хăйĕн сменинче 73,3 гектар сухаланă, 164 килограмм горючи перекетленĕ.

55. Шăхасан районĕнчи **«Хĕрлĕ Октябр» колхоз** (колхоз председателĕ **Д. С. Степанов** юлташ). Колхоз тĕштырă тата пăрça-ясмăк культурисене, агротехника тĕлĕшĕнчен пысăк пахалăхпа ĕçлесе, 8 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозсене пулăшма колхоз планран ирттерсе 10 гектар акса хăварнă. Ĕçре уйрăмах **Н. Амурский** юлташăн бригади палăрнă, вăл тĕштырăсене 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çак сухаçăсем фронтри пек ĕçленĕ: **Николай Амурский, Мария Кузьмина, Пелагея Суркина, Мария Орлова** юлташсем кулленхи нормăна яланах 130-шар процент тултарса пынă; сÿрелекенсем—**Г. Андреев, А. Алексеев** юлташсем, хăйсен нормине кунсеренех 130-шар процента çити тултарса пынă; тырă акакансем—**П. Григорьев, Н. Орлов, М. Коновалов** юлташсем кулленхи нормăна яланах 160-шар процента çити тултарса пынă.

56. **Александр Андреевич Абликов** — Улатăр МТС-ĕнчи тракторист. Вăл СТЗ—НАТИ газогенераторлă трактора çуракине тухмашкăн вăхăтра юсаса хатĕрлесе çитернĕ. Акара хăйĕн кулленхи нормине яланах 150 процент çити тултарса пынă.

Ленинăн-Сталинăн никам çĕнтерейми ялавĕпе малалла, нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкма!

Ремесло училищисемпе чугунçул училищисен тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн

УСЛОВИЙĔСЕМ

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ пирĕн çĕршывăн халăх хуçалăхĕнчи пур отраслĕсенче те социализмлă ăмăртăва çĕнĕрен çĕклентерсе ячĕ.

Промышленноçăн металлурги, авиаци, танк тата ытти отраслĕсенче малта пыракан заводсенчи работниксен паха пуçарăвне ремесло, чугунçул училищисенче тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсенче вĕренекен ачасемпе работниксем пурте хĕрÿллĕн йышăнса илчĕç тата социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнма кăмăл турĕç.

Училищĕсемпе шкулсенчи вĕренекенсен тата работниксен кăмăлне хапăлласа, Ĕç Резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ремесло училищисемпе чугунçул училищисен тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн çакăн пек условийĕсене туса çирĕплетеççĕ:

1. Ремесло, чугунçул училищисенчен тата ФЗО шкулĕсенчен хăшĕсем ак çак сене тунă—çавсем ăмăртура çĕнтерекенсем шутланаççĕ:

а) вĕренÿпе производство процесĕсене тĕрĕс организациленĕ; училищĕри е шкулти пур вĕренекенсем те çав училищĕне е шкула панă вĕрентÿ программисем тăрăх производство хăнăхăвĕсене тĕплĕн, «хорошо» тата «отлично» паллăсемпе вĕренсе алла илнĕ;

б) производствăна вĕреннĕ хушăра государствăн производствăллă заказĕсене пурнăçласа тăраççĕ;

в) вĕренÿ мастерскойĕсене, общежитисене тата столовăйсене кăтартуллăн тытса тăраççĕ;

г) всевобуч программине хорошо тата отлично вĕренсе пĕтернĕ ачасен хисепне ытти училищĕсенчен е шкулсенчен ытларах ÿстереççĕ, — çавăн пек училищĕсемпе шкулсем ĕнтĕ ăмăртура çĕнтерекенсем шутланаççĕ.

2. Социализмлă ăмăртура çĕнтернĕ ремесло, чугунçул училищисене тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсене ăмăрту условийĕсене лайăх пурнăçланăшăн çакăн пек званисем параççĕ:

«Лайăх ремесленнăй училище»

«Лайăх чугунçул училищи»

«Фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли лайăх шкул» тата вĕсене ГКО постановленийĕ тăрăх тунă Оборонăн Государственный комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ.

3. Ăмăртура çĕнтерекен училищĕсемпе шкулсем валли, вĕренекенсен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатма, укçан памалли премисем тунă:

пĕрремĕш премисем — 5

иккĕмĕш премисем — 10

виççĕмĕш премисем — 20.

4. Социализмлă ăмăртура малта пыракансене — ремесло, чугунçул училищисен, фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсен вĕренекенĕсене, производствăна вĕрентекен мастерĕсене, старши мастерĕсене, директорĕсене тата ытти работникĕсене — СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен социализмлă ăмăрту отличникĕн значокĕпе, грамотăсемпе тата хаклă парнесемпе наградăлама тăратаççĕ.

5. Облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче социализмлă ăмăртун итогĕсене Ĕç резервĕсен Управленийĕсем, комсомолăн облаçсенчи, крайсенчи комитечĕсем тата Союзлă республикăсенчи ВЛКСМ Центральный Комитечĕ июнь уйăхĕнчен пуçласа кашни уйăхрах, çитес уйăхăн 5-мĕш числинчен кая юлмасăр тăваççĕ.

Премисем парассине Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ кашни уйăхра пĕрер хут çитес уйăхăн 15-мĕш числинчен кая юлмасăр туса ирттереççĕ.

Социализмлă ăмăртун итогĕсене «Комсомольская Правда» хаçатра тата вырăнти хаçатсенче пичетлеççĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн ялавне, Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ тăратнипе, ГКО постановленийĕ тăрăх параççĕ. Ялава социализмлă ăмăртура çĕнтерекене Оборонăн Государственный Комитечĕн представителĕ парать.

Ремесло, чугунçул училищисен тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕпе пĕр вăхăтрах училищĕсемпе шкулсенче хăйсенче вĕренекенсен вĕренÿпе производствăллă чи лайăх группи пулса тăрассишĕн ăмăрту организацилеççĕ.

Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ĕç резервĕсен системинчи мĕнпур вĕренекенсемпе работниксене социализмлă ăмăртăва, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавĕшĕн пыракан кĕрешĕве активлăн хутшăнма чĕнеççĕ.

Юлташсем, вĕренекенсем, производствăллă вĕрентÿн мастерĕсем, училищĕсемпе ФЗО шкулĕсен директорĕсем, ĕç резервĕсен Управленийĕсен руководителĕсемпе работникĕсем! Юлташсем комсомолецсем! Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ эсир квалификациллĕ рабочисене хатĕрлес тата правительствăн фронт валли панă заданийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура çĕнĕ çитĕнÿсем тăвăр тесе шанса тăраççĕ.

Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне — 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкма тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларма хушакан приказне пурнăçлама Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе хамăрăн пĕтĕм вăя хурар!

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче

Паллă мар патриотăн геройла ĕçĕ

СУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Çĕрле нимĕçсен отрячĕ йышăннă пĕр ял çине партизансен отрячĕ пырса тухнă, ăна хăйĕн çапăçăвĕсемпе чапа тухнă Ц. юлташ ертсе пынă. Отряд сасартăк çапăçу пуçласа янă. Ăнĕсене çухатнă, аптраса ӳкнĕ гитлеровецсем хăйсен аманнă салтакĕсене, хĕçпăшалĕсене пăраха-пăраха тарма тытăннă. Партизансен çулне пĕр вырăнта пулеметран вăйлă персе тăни картласа лартнă.

Виçĕ партизан çав пулемет персе тăракан пӳрте çавăрса илме тавралла кайнă. Вĕсем пырса çитнĕ çĕре ку пӳртре пулемет пулман, пачах шăпланнă. Нимĕçсем, çĕр тĕттĕммипе усă курса, пулеметне кӳршĕ пӳрте куçарнă иккен. Çак пӳрт кантăкĕнчен пĕр çын пуçне кăларса пăхнă. Уçах мар сасă, ватă çын сасси:

— Юлташсем! Кунта нимĕçсем, аркатăр вĕсене!—тени илтĕннĕ.

— Тух унтан часрах!—тесе кăшкăрнă партизансем.

Пӳртре виçĕ хутчен пăшал сасси илтĕннĕ. Нимĕçсем старике персе пăрахнă. Партизансем пӳртелле гранатăсем ывăтнă. Пулеметне аркатнă, фашистсен 2 офицерне тата 3 салтакне пĕтерсе тăкнă. Çакăн хыççăн партизансен отрячĕ хăюллăн малалла кайнă. Яла нимĕçсенчен туртса илнĕ.

Кам пулнă-ха çак çын, хăй пурнăçне шеллемесĕр партизансене пулăшнă старик? Ялти çынсенчен пĕри те ăна палламан. Вăл кӳршĕ ялтан килнĕ çын тенĕ. Çак камне те палласа илме тӳр килмен çынна, патриота, вăл геройла ĕç тунине хисеплесе, çарти йĕркепе чыслăн пытарнă.

И. ДЕНИСОВ.

ВАТĂ КОЛХОЗНИКĂН ЧАПЛĂ ĔÇĔ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ватă колхозник Герасим Семенович З. хăйĕн тăван ялĕ патнелле нимĕçсен 150 çынран тăракан отрячĕ сывхарса пыни çинчен пĕлнĕ; вăл яла партизансем оккупантсенчен ирĕке кăларнă пулнă.

Герасим Семенович ялти пĕтĕм халăха тăшмана хирĕç çапăçма тăратнă. Хресченсем яла пырса кĕмелли çулсем çине минăсем хурса тухнă, кашкăр шăтăкĕсем чавса хунă. Пĕр çапăçма питех те меллĕ вырăнта Герасим Семенович засада тунă. Тăшман çав засада тĕлне çитсен, ватă колхозник команда панă та, пăшал сасси шăтăртаттарма тытăннă. Нимĕçсен 26 çын вилсе выртнă хыççăн ирĕксĕрех каялла чакмалла пулнă. Фашистсем иккĕмĕш атака пуçласа янă, анчах малтанхи вырăнпа мар, тепĕр енчен. Анчах 22 гитлеровец хресченсем малтанах лартса тухнă минăсем çине пулса сирпĕне-сирпĕне кайнă. Кунта та ĕç тухманнине кура, гитлеровецсен вара çав яла тытса илес шухăшпа ирĕксĕрех пăрахмалла пулнă. Ял оборонине организацилекен ватă колхозник партизансен отрядне кĕнĕ. (ТАСС).

Первомайски районра çураки мĕншĕн юлса пырать?

Первомайски районра çураки ĕçĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Район тата хăшпĕр колхозсен руководителĕсем хăйсем мĕшĕлтетсе ĕçленине çуракин малтанхи кунĕсенче: «çĕр нӳрĕ, санталăк йĕпе тăрать», тесе ăнлантарса пама пăхатчĕç. Халĕ ĕнтĕ çĕр те нӳрĕ мар, çанталăк та уяр, анчах районра çураки ĕçĕсем çаплах вăраххăн пулса пыраççĕ-ха.

Майăн юлашки пилĕк кунĕнче, 24-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшне çити хушăра, район ака планне 10 процент чухлĕ çеç ӳстерсе тултарнă. Çуракине тухнăранпа уйăх çитрĕ, анчах тĕштырă тата пăрça-ясмăк культурисене 43 колхозран 20 колхоз кăна акса пĕтернĕ. Районра тĕштырă культурисем тата 1000 гектара яхăн акмалла.

Кунта халĕ çураки ĕçĕсем юлса пынине урăхла сăлтавсемпе ăнлантарма тытăнчĕç. «Вăрлăх çитмест, туртăм вăйĕ тивĕçмест», теççĕ вĕсем. Анчах вăхăчĕ вĕсене кĕтмест.

Çураки ĕçĕсем вĕçленсе пымалла. Халĕ кашни сехет тырпул тухăçлăхне чакарма пултарать, çавăнпа та вăхăтпа туллин усă курмалла, пур пек туртăм вăйне тата тракторсене пĕр чарăнусăр ĕçлеттермелле. Анчах кунта туртăм вăйĕпе тата тракторсемпе тивĕçлипе усă курмаççĕ. Çураки юлса пынин тĕп сăлтавĕ çакăнта пулать те ĕнтĕ.

Эпир майăн 30-мĕшĕнче Пашъелĕнчи «Комсомолец» колхозра пултăмăр. Акана майăн 3-мĕшĕнче тухнă пулин те колхоз ку тарана çитсе 307 гектар кăна акнă, 483 гектар акмалла пулнă. Колхоз председателĕ И. Никитин каланă тăрăх, çураки «лашасем тивĕçмен» пирки юлса пырать. Тĕрĕссипе илсен кунта лашасем çителĕклех. Кашни лашапа сухаламалли норма 4 гектартан та иртмест. Кунсăр пуçне колхозра тата 4 трактор пур. Колхоз юлса пынин сăлтавĕ—ĕçе организацилеме тата туртăм вăйĕпе усă курма пĕлменнинче. Кунта колхозниксем ĕçе ирхине 7—8 сехетре тин тухаççĕ. 4—5 сехет хушши ĕçлеççĕ те киле апатланма кĕреççĕ. Апатран 15 сехет те 30 минутăра е 16 сехетре тухаççĕ, 19—20 сехетре каллех таврăнаççĕ. Çапла вара вĕсем кунне 9 сехет çеç ĕçлеççĕ. Пĕрлешсе апатланма колхоз столовăй организацилемен. Çакна пула ĕç тухăçлăхĕ кунта пачах çителĕксĕр.

Майăн юлашки пилĕк кунĕнче тĕштырăсем акас ĕçе вĕçлеме колхозра вăрлăх та лашасем те çителĕклĕ пулнă. Руководительсем ертсе пыман пирки ака ĕçĕсем вăраха тăсăлса пыраççĕ. Колхозра хĕрӳллĕ ĕç пынă вăхăтрах тата колхозăн çĕрулмине лартса пĕтермен пулин те, колхоз правленийĕ колхозниксене хăйсен кил вырăнĕсене çĕрулми лартма лашасем панă. Çапла, сăмахран, майăн 30-мĕшĕнче 10 лаша колхозри çураки ĕçне хутшăнман. Колхоз председателĕ Никитин тата пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Акимов юлташсем хăйсем те колхозри ĕçсемшĕн мар, кил вырăнĕнче çĕрулми лартса хăварас тесе ытларах интересленни курăнать.

Районри ытти колхозсенче те çакăн пек тĕслĕхсене тĕл пулма пулать. Анчах район руководителĕсем вăл çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкрет-най мерăсем йышăнман. Çавăнпа та районри «Сталинград», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Правда» колхозсенче çураки планне 65—70 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Ака ĕçĕнче ытти çитменлĕхсем те тĕл пулаççĕ. Шăйрăксем хăварнине, вăрлăх витĕнмесĕр юлнине час-часах тĕл пулма пулать. «Сталинград» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче шăтман вăрлăх акса хăварнă. «Сталинград» колхозра кок-сагыза хакламан пирки ăна акас плана 30 процент çеç тултарнă. Йĕтĕн-кантăр культурисене акма халĕ те тытăнманха, вĕсен вăрлăхне те хатĕрлесе çитереймен.

МТС директорĕ Желтухин, политотдел начальникĕ Иванов юлташсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. МТС майăн 30-мĕш тĕлне çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне 70 процента яхăн çеç пурнăçланă. Иванов юлташ тракторсем начар ĕçленине тĕрлĕрен сăлтавсемпе ăнлантарса парать. Çуракине тухнăранпа 4 трактор пачах ĕçлемен. Вĕсенчен иккĕшĕ сухана тухиччен çĕмĕрĕлсе кайнă.

4-мĕш бригадăри пĕр трактор блокĕ ĕç вырăнне çитиччен çĕмĕрĕлсе кайнă та ăна халĕ те юсаса ĕçе яман. Çавăн пекех 22-мĕш номерлĕ газогенераторлă трактора та вăхăтра шыв яман пирки пăсса пăрахнă, çавăнпа вунă кун хушши вăл ĕçлемесĕр ларнă. Кунта тракторсене туллин ĕçлеттерессишĕн тăрăшмаççĕ. Кусса çӳрекен мастерской организацилемен.

Трактористсен ĕç дисциплинийĕ сӳрĕк. П. Никифоров, Чекушкин трактористсем уйри ĕçе пăрахсах тракторсемпе хăйсен кил вырăнĕсене сухалама кайнă. Ĕç дисциплинине пăсакансене ответ тыттармаççĕ.

МТС-ра лайăх ĕçлекен трактористсем те пур. 6-мĕш номерлĕ бригада çуракинче план тăрăх 542 гектар сухалас вырăнне майăн 27-мĕш тĕлне 589 гектар сухаланă. Н. Мефодьева трактористка СТЗ—НАТИ тракторпа 142 гектар сухаласа ĕç планне 138 процент тултарнă. Ф. Никитин тракторист çак тракторпах сменăра 20-шер гектар сухаласа пырать. Вĕсемех çунакан япалана та чылай перекетлесе хăварнă. В. Маков, П. Корнилов трактористсем 100-шер гектар сухаласа плана иртерсе пурнăçланă, 750-шер килограмм чурка перекетлесе хăварнă.

МТС дирекцийĕ лайăх ĕçлекен трактористсен ĕç опытне сарма тăрăшмасть, çамрăк трактористсене вĕрентсе пымасть.

П. НИКОЛАЕВ.

ПЕРВОМАЙСКОЕ, майăн 1-мĕш. (Телефонпа).

ТИСЛĔК ТĂКАÇÇĔ

ИШЛЕЙ. Ямайкасси ялсоветĕнчи колхозсем ирхи çĕртме сухине тăваççĕ. Агротехникăллă мероприятисене пурнăçласа, вĕсем çĕртме хирне тислĕк тăкса сухалаççĕ. Каганович ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче хире 350 лав тислĕк кăларчĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем ăнăçлăн вĕçленчĕç

Республикăри шкулсенче çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вĕçленчĕç. Кăçалхи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, ăнăçлăн иртрĕç. Вăл çапла пулмалла та. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче, отечественнăй аслă вăрçăн условийĕсенче, шкулсем, учительсемпе шкул ачисем нихăçанхинчен пысăк хавхаланупа ĕçлерĕç. Икĕ-виçĕ сменăпа, пĕр çын икĕ çыншăн ĕçлесе, шкулсем вĕренӳ пахалăхне малалла хăпартса пычĕç.

Пĕтĕм çĕршывра пысăк çĕкленӳ пулса пынă май, совет школьникĕсем те кăçал çине тăрса вĕренчĕç. Вĕсем шкулти дисциплинăна çирĕп тытса пыма тăрăшрĕç, вĕренӳпе пĕрлех халăхшăн, обществăшăн усăллă ытти ĕçсене туса пычĕç. Вĕренӳ пахалăхне хăпартса пырас ĕçре шкул ачисене учительсем анчах мар, ачасен ашшĕ-амăшĕсем, мĕнпур совет общественноçĕ пулăшса пычĕ.

Нумай шкулсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене тивĕçлĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Пур шкулсенче те тенĕ пекех вĕренӳ программисене пурнăçланă, тĕрĕслевсем пуçланиччен вĕреннине аса илсе çирĕплетме ĕлкĕрнĕ.

Шкулсенчен нумайĕшĕнче вĕренекенсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене уйрăмах йĕркеллĕ çӳренине палăртмалла. Сăлтавсăрах тĕрĕслеве пыманнисен хисепĕ кăçал пысăк мар. Вĕренӳ çулĕ хушшинче шкула йĕркеллĕ çӳремен ачасем те тĕрĕслевсене йĕркеллĕ пынă тата лайăх отметкăсем илме тăрăшнă.

Кăçалхи тĕрĕслевсен тепĕр лайăх палли вăл тĕрĕслевсене тăма тивĕçлĕ пулнисен хисепĕ чылай ӳсни. Сахал мар шкулсенче тĕрĕслеве тăма тивĕçлĕ пулманнисем пачах та çук.

Шкулсен, сутĕç пайĕсен пĕлтерĕвĕсем, шкул инспекторĕсен материалĕсем тĕрĕслевсен итогĕсем кăçал чылай шкулсенче ăнăçларах пулнине палăртаççĕ.

Калинински районра тĕрĕслевсем вăхăтĕнче 7 шкулта начар паллăсем пĕр вĕренекен те илмен. Сĕнтĕр районĕнчи Сергеевкăри пуçламăш шкулта (шкул заведующийĕ Мастаченко) 94 ача вĕреннĕ, IV-мĕш класри 39 ача пурте шкула пĕтерсе тухнă, ытти классенчи 55 ача пурте аслăрах класа куçнă, çав класра иккĕмĕш çул вĕренме хăварнисем те, кĕркунне тĕрĕслев тытма хăварнисем те пачах çук. Ку шкулта икĕ учительница — Мастаченко тата Апросьевна юлташсем кашни ишер класпа ĕçленĕ.

Вăтам шкулсенче те кăçал вĕренекенсем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси чылай ӳсни курăнать. Сăмахран, Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕреннĕ 685 ачаран аслăрах классене куçнисемпе шкула пĕтернисем 629 ача пулнă (91,8 процент), X-мĕш класра вĕреннĕ 29 ача пурте шкула пĕтерсе тухнă, вĕсенчен 7 ача отличник аттестатне илнĕ (24 проц. ытларах). Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕреннĕ 484 ачаран 443 ача аслăрах класа куçнă е шкула пĕтерсе тухнă (91,5 процент), 10-мĕш класри 30 ача пурте шкула пĕтерсе тухнă, вĕсенчен 5 ача отличниксем (16 процент ытларах).

А. ОТАЧКИН.

Совет партизанĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăратаççĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Совет партизанĕсен кĕрешĕвĕ аллăн сарăлнине Германи пичечĕн ирĕксĕрех йышăнма тивет. «Франкфуртер цейтунг» хаçат майăн 24-мĕшĕнчи номерте çапла çырнă: «Хĕлле, малти линисенче оборонăллă хаяр çапăçусем пынисĕр пуçне, пирĕн фронтăн тылĕнче унтан кая мар хаяр кĕрешӳ (ăна вăрçах теме пулать) вăйлăн пулса пычĕ. Çав кĕрешӳре партизансен чаçĕсем вăрмансенче хĕçпăшалсен тата апат-çимĕçсен склачĕсем тăракан опорнăй пунктсемпе усă курма пултарнă. Нимĕçсен обоз чаçĕсен, полиципе жандармери батальонĕсен пĕрмаях тăшмана хирĕç çапăçма тивнĕ. Кам пĕ... велтухăçĕнче хĕл каçнă, çавă тылри чаçсем çине мĕнле йывăрлăх лекнине, партизансене хирĕç кĕрешӳ çĕрте шухăшĕ вилнине пĕлет. Çав пирĕншĕн ялан пек мар кĕрешӳ çинчен, тĕп çулйĕрсене пӳлсе лартакан, чугун çулсене сирпĕнтерсе яракан, çисĕм пек хăварт тапăнакан, хăварт пытанакан противник çинчен тăван çĕршывра пĕлмеççĕ. Партизансем пур сукмаксене те пĕлеççĕ. Кам çакăн пек икĕ фронтпа кĕрешессине тӳссе курнă, вăл çак хĕлре пирĕн войскăсем мĕнле пурăнса ирттернине ăнланса илет».

Германия çĕнтерессине Германире никам та ĕненмест

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан австриецсем Швеци промышленникĕнчен çыру илнĕ. Çав çырура Швеци промышленникĕ хăй гитлерла журналистпа, ĕлĕкрех Германин дипломатиллĕ ĕçĕнче ĕçленĕскерпе, калаçни çинчен çырать. Журналист ăна çапла каласа панă: Германире çак вăрçăра нимĕçсем çĕнтерессине никам та ĕненмест. Халăх хушшинче тата çарта та салхулăхпа шанчăксăрлăх сарăлнă. Хăй Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кайни çинчен каласа, çав журналист çакна палăртнă: тĕрĕссипе каласан, Германия вăрçăра чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те вырăсем çырса пĕлтернинчен ытларах сухатусем тӳснĕ. Журналист каланă тăрăх, фронт линийĕнчен леререх темиçе çĕр километр тăрăшĕнче Германин çĕмĕрĕлнĕ машинисемпе танкĕсене курма пулать. Германин çын мĕн чухлĕ пĕтнине пĕлтартма журналист, сăмахран, çапла каланă: «СС» дивизийĕсенчен пĕринче, фронтран таврăннă скĕрĕнче, мĕнпурĕ те 70 çын çеç пулнă. Германи салтакĕсен çапăçас хастарлăхĕ чылай чакнă. Çĕнĕрен хупса панă çынсен çапăçас кăмăл вара пĕртте çук.

Францире выçлăх пирки пăлхавсем пулса иртнĕ

Парижри халăх полиципе вăйлăн тытăçса илнĕ

ЖЕНЕВА, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Францире продовольстви тĕлĕшпе лару-тăру çĕнĕрен вăйлăн пăсăлса кайнă. Германи влаçĕсем ку таранччен хупмасăр хăварнă рыноксене пурне те хупса лартма распоряжени панă. Çавăн пекех магазинсене те нумайĕшне хупса лартма хушнă. Продуктсем памалли нормăсене, ахаль те вĕсне çитиччен кĕскетсе çитернĕскерсене, татах чылай чакарнă. Çав май чылай хуласенче вырăнти халăх хушшинче вăйлă пăлханусемех пулса иртнĕ.

Французсен хаçачĕ «Пари суар» çапла çырать: майăн 31-мĕшĕнче ирхине Парижра полиципе халăх хушшинче вăйлă тытăçусем пулса иртрĕç. Севр урамĕнчи магазинсенчен пĕри, ун умĕнче темĕн чухлĕ халăх пĕр талăка яхăн магазин уçăласса кĕтсе тăнă хыççăн, карточкăсем тăрăх продуктсем пама пăрахнă. Выçă халăх: «Шуйттан патне кайтăр Германи çарĕ! Хамăр çăкăра нимĕçсене памастпăр!» тесе кăшкăрса, магазина çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Суйланă çынсем халăха çавăнтах продуктсем валеççе пама тытăннă.

Полици пырса çитнĕ те пухăннă халăха салатма хăтланнă. Вĕсене хирĕç пăшалтан пеме тытăннă. Пĕр офицерпа полици агентне вĕлернĕ тата виçĕ полицейскине амантнă.

Кельн хули çине тапăнни çинчен генерал-лейтенант Арнольд калани

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăш çарĕн начальникĕ генерал-лейтенант Арнольд Англи авиацийĕ Кельн хули çине тапăнни пирки çапла каланă: «Çавăн пек тапăнассине кашни çĕрех туса ирттерессине эпир мĕн чухлĕ хăвăртрах ĕçе кĕртĕпĕр, вăрçă мĕн иккенне Германия çавăн чухлĕ часрах туйса çитĕ», тенĕ. Унтан Арнольд Америка летчикĕсем Америка самолечĕсем çинче вĕçесси, вĕсенчен Америка эскадрильисем тăвасси çинчен каланă.

Финляндири халăхăн вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлĕсем

Таннер уççăнах йышăнни

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Финсен «Суомен сосиалидемократти» хаçачĕ Таннер Таммерфорсри митингра сăмах тухса калани çинчен çырнă. Çав сăмахра Таннер: «Вăрçа хутшăнмасăр юлассипе усă курманнишĕн Финлянди граждăнĕсем нумайĕшĕ ӳпкелешеççĕ», тенĕ. «Вăрçăран пăрăнса юлас тĕлĕшпе мĕн тума кирлине пурне те туманшăн çĕршывăн правительствине тата ертсе пыракан представителĕсене айăплакан» çынсене Таннер хытă ятланă. Таннер çав çынсене «сăтăрçăсем» тата «саботажниксем» тесе каланă.

Таннерăн тата апат-çимĕç тăратас тĕлĕшпе йывăрлăхсем ӳснине, хресченсем правительствăна тара парасшăн мар-пулнине ирĕксĕрех йышăнмалла пулнă.

Швеци хаçачĕ «Нью-даг» çакна палăртать: Таннерăн çак сăмахĕ Финляндире оппозици вăйланнине пĕлтерет. «Гитлертан уйăрăлса кайни кăна,—тесе çырать хаçат, Финлянди халăхне çăлса хăварма пултарать, анчах Таннерăн политики Гитлерпа союз тытассине тата вăрçă малалла чăсăлассине пĕлтерет».

—o—

КĔСКЕН

● Грецире нимĕçсен çарне турттарса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă. Нимĕçсен 40 салтакĕ вилнĕ, 100 салтакĕ аманнă. Нумаях пулмасть нимĕçсен 3 салтакне вĕлернĕшĕн грексен 10 заложникне асаплантарса вĕлернĕ.

● Кăнтăр-Африка Союзĕн суту-илӳ министрĕ Стэтэфорд çапла пĕлтернĕ: США, Инди тата Кăнтăр-Африка Союзĕ тĕнчере чей мĕн чухлĕ пур, ăна пĕтĕмпе тенĕ пекех илсе хураççĕ, тенĕ.

● Францире тумтир тупса илесси апат-çимĕç тупса илессинчен те йывăртарах. Влаçсем çĕнĕ тумтир илмелли талонсене пачах тумтирсĕр тăрса юлнă çынсене кăна параççĕ.

● Югославин Канадăри çĕнĕ посланникĕ Каикар çапла каланă: вăл шанса тăнă тăрăх, Канадăра çак çитес вăхăтсенчех Югославин хĕçпăшаллă вăйĕсене вĕрентес ĕç пуçланса каймалла.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чăваш хресченĕсен 1842 çулти восстанийĕ

(Çĕр çул тултарнă май)

Чăваш хресченĕсен экономикăллă положенийĕ XIX ĕмĕрĕн малти çур ĕмĕрĕнче питех те йывăр пулнă. Хресченсен çĕр сахал пулнă. Чăвашсем пĕчĕк хура пӳртсенче, хăйă çутипе ĕçлесе, выçăллă-тутăллă пурăннă, трахома чирĕпе асапланнă.

Чăваш ялĕсенче суту-илӳ тăвакан усламçăсем, подрядчиксем курăна пуçланă. Вĕсем чухăн хресченсен шучĕпе пуйса пынă. Хырçă-марçăсем çулран çулах ӳссе пынă. Çавна тӳлеме чухăн хресченсен пуянсенчен кивçен илме тивнĕ, уншăн пуянсем йӳнĕ хакпа чухăнсен тыррине илнĕ. Шупашкар, Етĕрне, Çĕрпӳ уесчĕсенче кашни арçын пуçне тивекен çĕрпĕн вăтам шутпа 1839—1841 çулсенче кашни çул 14 т. 30 пус хырçă тӳлемелле пулнă. Çавна тӳлеме 40 — 46 пăт тырă сутмалла пулнă. Тырă кашни десятин çинче 32 — 36 пăт туса илнĕ. Çак данăйсем питĕ чăваш хресченĕсен пурнăçĕ йывăр пулни çинчен калаççĕ. Чăвашсене хутла вĕрентмен. Учрежденисенчи чиновниксем кирек мĕнле ĕçпе пынă чăвашран та взятка илнĕ, унтан мăшкăлланă. Земски чиновник, судья, вăрман уприйĕ, вулăс писарĕ, ял писарĕ т. ыт. те пурте чăваш хресченĕсенчен ытларах шăйăрса илме пăхнă.

I Николай патшара ларнă вăхăтра хресченсене крепостнăйла эксплоатацилесси вăйла та вăйланнă. Помещиксен аллинчи хресченсемшĕн те, удельнăй ведомствăри хресченсемшĕн те, государство аллинчи хресченсемшĕн те пурнăç йывăрланса пынă.

1836 çултан пуçласа правительство государственнăй хресченсем хушшинче улшăнусем тума пăхнă: хырçă-марçă тӳлессипе, вĕсене пухассипе урăхла йĕрке, вырăнсенче управленин çĕнĕ аппаратне тума шутланă. Çавăн пек тунипе ытларах тупăш илесшĕн, хресченсем унчухнехи строя хирĕç тăрассине чакарасшăн пулнă. Ку улшăнусем хресченсен пурнăçне татах йывăрлатнă, чăваш хресченĕсенчен тĕрлĕ хырçăсемпе кулянайсем нумай пухма пуçланă.

Хресченсене крепостникла эксплоатацилесси ытларах та ытларах ӳсни Российăри хресченсен класс кĕрешĕвне вăйлатнă. 1826-мĕшпе 1834 çулсем хушшинче хресченсен пăлханăвĕсем 150, 1836 çулпа 1844 çул хушшинче — 216, 1845-мĕшпе 1855 çулсем хушшинче, I Николай патшара ларнă юлашки вунăçулта, хресченсен пăлханăвĕсем 348 пулнă. 1834 тата 1836 çулсенче Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи чăвашсемпе тутарсен пăлханăвĕсем пулнă. Çав пăлхавсем хысна аллинчи чăваш тата тутар хресченĕсене удельнăй ведомствăна куçарнă тата общество çĕрĕсене пĕрле сухалаттарнă пирки пулнă. Пĕрле сухалаттармалла тунинче хресченсем тепĕр хут помещик патĕнчи йĕркене таврăнине курнă. 1833 çулта Шупашкар уездĕнчи Кушников помещикĕн хресченĕсем, 1841 çулта Çĕрпӳ уездĕнчи Вăтакас тата Патти ялĕсенчи Чашков помещикĕн хресченĕсем пăлханнă. Ку пăлхавсене пурне те земство полицийĕ пусарнă.

Чăваш, мари хресченĕсен пăлхавĕсем уйрăмах 1841 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче тата 1842 çулти май уйăхĕнче аллăн саралаççĕ. Пур çĕрте те царизма хирĕç восстанисем пулаççĕ. Хресченсем 1842 çулта восстани тунин сăлтавĕсем çакăнта: патша правительстви законĕсем хырçăсемпе кулянайсене нумай пысăклатнă, хресченсен экономикăллă положенийĕ начарланнă; чиновниксем халăхран мăшкăлланă, взяткăсем, ирĕксĕрлесе хырçă-марçăсем илни çине хресченсем хытă тарăхнă; 1841 çулта Хусан кĕпĕрнинче пур çĕрте те вулăс кантурĕсем çумĕнче тырă актарни, çĕрулми лартмарни тата 1840—1841 çулсенчи выçлăх хресченсен хуçалăхĕсене питех те начарлатса хăварнă. Çав сăлтавсем пирки чăваш хресченĕсем йăлтах тарăхса çитнĕ. 1841 çулăн вĕçĕнче обществăпа пĕрле сухалассине тата вулăс кантурĕсем çумĕнче çĕрулми лартассине хирĕç, тырпула хысна парассине хирĕç уйрăм ялсенчи хресченсен пухăвĕсем приговорсем йышăннă.

Обществăпа пĕрлешсе сухалас йĕркене тунă пирки хресченсенчен чи лайăх çĕрсене туртса илнĕ, ăна хресченсенех сухалаттарса актарнă, пухса кĕртнĕ тырра магазейсене хурларнă, çав тырă уездри влаçсен аллине лекнĕ. Çĕр мĕн чухлĕ пуррине, ĕç вăйне, вăрлăхсене шута илнĕ. Çавăнпа пĕрлех пуян хресченсемпе вырăнти влаçра тăракансем обществăра пĕрлешсе сухалассинчен хăтăлса юлнă. Çав ĕçе помещик ĕçлеттернĕ чухнехи майсемпех туса ирттернĕ.

1841 çулăн вĕçĕнче Шупашкар уездĕнчи Липовкăпа Сĕнтĕрвăрри вулăсĕнчи (хальхи Октябрьски районри) чăваш хресченĕсем пăлханма пуçланă. Çав çулăн ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче унти хресченсем обществăпа сухалаттарса актарнине, тырпула хысна илнине хирĕç приговорсем йышăннă. Хресченсем çавна вара вĕсене удельнăй ведомство аллине параççĕ тесе шутланă, мĕншĕн тесен унччен кăна, 1836—1838 çулсенче, Пăва тата Кăрмăш уесчĕсенче хăшпĕр чăваш ялĕсене удельнăй ведомствăна куçарнă пулнă. 1840—1841 çулсенче тырпул начар пулнă пирки чăваш хресченĕсене выçлăх аптăратнă, çапах та округри начальство 1842 çулăн пуçламăшĕнче çуркунне хысна валли тырă актармашкăн вăрлăх пама хушнă. Çаксем хресченсене тарăхтарса çитернĕ. Çав çул çуркунне Шупашкар тата Етĕрне уездĕнчи чăваш хресченĕсем хăйсен ирĕкĕпех магазейсенчи тырра валеçнĕ. Çак пăлхану Çĕрпӳ районне те куçнă. Массăллă восстани пуçланнă, Етĕрне уездĕнчи сакăр вулăса — Шемертен, Чаканар, Шăмат, Тинсарино, Исаково, Упи, Асакасси, Устинск вулăсĕсене (хальхи Калинински, Элĕк, Вăрнар, Советски, Красноармейски районсене) сарăлнă. Восстани аллăн сарăлнă пирки хăраса ӳкнĕ земски исправник (Етĕрнери) çарсем яма ӳслти влаçсенчен ыйтнă, полицие тата инвалид-салтаксен командине пăлхавсене пусарма янă. Асакасси вулăсĕнчи Мăнъял патне майăн 15-мĕшĕнче чăваш хресченĕсем ултă пин çын ытла пухăннă. Кунта пысăк восстани пуçласа яма шутланă пулнă. Унта вĕсем хăйсен восстанине ертсе пыракан çынна, Пугачев пек çынна, тупма шутланă. Анчах хресченсене пĕрлештерсе ертсе пыракан çын тупăнман. Хусантан Урал казакĕсен полкĕпе инвалид-салтаксен роти, пĕтĕмĕшпе 400 çын килсе çитнĕ. Вĕсем хресченсен восстанине хаяррăн пусарнă.

1842 çулти майăн 19—20-мĕшсенче Чикме уездĕнчи Шурча патĕнче пысăк восстани пулнă, халăх ăна «Шурча вăрçи» тесе ят панă. Кунта чăвашсемпе марийцсем восстани тунă. Восстание Шурча, Пушкăрт, Юнга, Сĕнтĕр, Кошваш вулăсĕсенчи (хальхи Ишлей тата Сĕнтĕр районĕсенчи) хресченсем хутшăннă. Шурча патĕнче хресченсемпе патша войски хушшинче вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Патша войски (полковник Поль пĕлтернĕ тăрăх) чăвашсемпе марийцсене 600 çынна яхăн тытса хупнă. Кунта 800 çынлă патша войскине (казаксемпе инвалид-салтаксенчен тăраканскерне) хирĕç чăвашсемпе марийцсем 15 пин çын тухнă. Восстани руководителĕсем Степан Палатай (Сĕнтĕр районĕнчи Тяптяево ялĕнчен), Степан Ильбарас (Пушкăртран), Саватька, Федор Михапар (Оринкинăран) пулнă.

Восстани руководителĕсенчен пĕри — Василий Григорьев çартан таврăннă унтер-офицер пулнă. 1814 çулта Париж хулине илнĕ çĕрте паттăррăн çапăçнăшăн ăна 4-мĕш степень «Св. Анна» орденĕпе тата кĕмĕл медальпе наградăланă. Унăн послужной списокĕнче вăл пуринчен малтан Париж хулине кĕрсе кайнине палăртнă пулнă. Çартан таврăннă тепĕр салтак Сергей Афанасьев (Иккĕмĕш Васкассинчен) Парижа илнĕ çĕрте çапăçнăшăн наградан илнĕскер пулнă. Çав салтаксене халăх питĕ юратнă. Вара тăватă казакпа пристав Василий Григорьева тытма пырсан, Тяптяева ялĕнчи, Орбаш околодокинчи хресченсем казаксене Григорьев патне яман, вĕсенчен хĕçпăшалсене туртса илсе ялтан хăваласа янă.

Çак «вăрçăра» икĕ кун хушшинче чăвашсенчен 8 çынна вĕлернĕ, 248 çынна амантнă, вĕсенчен 92 çын йывăр аманнă, кайран çавсем хушшинчен 31 çын вилнĕ. Çапла вара, 39 çынна вĕлернĕ. Аманнисем чылайĕшĕсем, вĕсене айăпларан хăраса, вăрмансенче пытанса пурăннă. Царизм хĕçпăшалсăр хресченсене çапла асаплантарса, вĕлерсе пĕтернĕ.

Чăваш тата мари хресченĕсен 1842 çулти восстанийĕ поражени тӳснĕ. Паллах ĕнтĕ, хресченсен уйрăм пăлханăвĕсем, рабочи класс ертсе пыман восстанисем, ăнăçлă пулма пултараймăн. Çак восстани хресченсем крепостной йĕркесене хирĕç тăнине палăртнă. Ку восстани аллăн сарăлнă. Ку тĕлĕшпе вăл, Пугачев пăлханăвĕ хыççăн, чăваш хресченĕсен пысăк восстанийĕ пулса тăрса историе кĕрет.

* * *

Октябрьти социализмлă аслă революци чăваш халăхне ирĕке кăларчĕ, чăваш халăхĕ тулли право илчĕ. Большевиксен партийĕ, Ленин тата Сталин ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çирĕпленчĕ. Совет влаçĕ пулнăранпа чăваш халăхĕ ытти халăхсем пекех пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕ. Анчах гитлерла вăрă-хурахсен банди Совет Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхне, никама пăхăнасмарлăхне пĕтерсе лартас, совет çыннисене чуралăхпа пусмăр айне тăвас шухăшпа СССР çине тапăнчĕ. Ирсĕр те ултавлă тăшмана хирĕç совет халăхĕ çĕкленчĕ.

Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçинче чăваш халăхĕн ывăлĕсем, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ, социализм çĕнтерĕвĕсене сыхлас ĕçре хăйсене шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Большевиксен партийĕпе аслă полководец Сталин ертсе пынипе, пирĕн Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ нимĕçсен фашистла мерзавецĕсене тĕппипех пĕтерсе тăкĕç.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Чебоксарская Межрайконтора Главзаготскотцентра доводит до сведения всех организаций и хозяйств, имеющих план обязательных поставок мяса государству о том, что скот всех видов без справок ветеринарного освидетельствования о состоянии здоровья скота, благополучии местности выхода скота и о произведении прививок — приниматься не будет.

Чебоксарская МРК Главзаготскотцентра.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТОБУМАЖНОЙ ФАБРИКЕ срочно требуются: зам. главного бухгалтера, знающий учет производства, ст. бухгалтер по расчетам с рабочими и служащими, ст. бухгалтер по материальному учету. Обращаться по адресу: ул. Карла Маркса, 20, к главному бухгалтеру.

РЕДАНЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 820 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: